ТЕМА: Валентин Урташ пурнăçĕпе пултарулăхĕ. „Пурăнас килет”- автобиографилле поэма.
УРОК ТĔСĔ:
Вăрçă вăхăтĕнчи поэзие тата çыравçă пултарулăхне вĕрентмелли урок.
ПĔЛŸ ТĔЛЛЕВĔ:
1.Вăрçă çулăмĕ витĕр тухнă çыравçăсен пултарулăхне тишкерессри.
2. Вăрçă вăхăтĕнче çырнă сăвăсен тĕп шухăшне пăхса тухасси.
САПĂРЛĂХ ТĔЛЛЕВĔ:
1.Поэтăн вăрçăри тата ĕçри паттăрлăхне кăтартасси, пуян шухăш-кăмăлне, паха енĕсене çутатса парасси.
2.Тĕрлĕ халăх çыннисем пĕр-пĕрне пулăшма хатĕр пулине, халăхсем хушшинчи туслăха кăтартасси.
3.Вăрçăри салтаксен паттăрлăхне ăша хывса вĕсем пек пулас шухăша аталантарасси.
ИЛЕМЛĔХ ТĔЛЛЕВĔ:
1.Вăрçă хирĕнчи салтаксем çынсен телейĕшĕн кĕрешнине, вĕсем тăшмана тĕп тăвассине ĕненсе тăнине, хăйсен тăван çĕр-шыв умĕнчи тивĕçне асрах тытнине курма тата туйма хавхалантарасси.
СЛОВАРЬ ĔÇĔ:
саламат, шомпол, ямшăк, хусах.
УРОК МЕЛĔСЕМПЕ МЕСЛЕЧĔСЕМ:
учитель сăмахĕ, ачасем каласа пĕлтерни(кĕске докладсем), презентаци мелĕ усă курни, компьютерпа юрă итлени.
ЛИТЕРАТУРА ТЕОРИЙĔ:
автобиографилле поэма.
КУРĂМЛĂХ ХАТĔРĔСЕМ:
Валентин Урташ сăн ўкерчĕкĕ, унăн кĕнекисен выставки, „Чăваш совет поэзийĕ” кĕнеке, В.Урташ „Тавах, аннем” юрри.
ПУПЛЕВЕ АТАЛАНТАРАС ХĂНĂХУСЕМ:
Ятарласа панă ыйтусем тăрăх калаçма хăнăхтарасси, уйрăмшарăн тухса калаçасси, илемлĕ вулама хăнăхтарасси.
УРОК ЭПИГРАФĔ:

Юрăпа эп пурнăça юратрăм,
Юрăпа сыватрăм сурана.
Юрăпа эп ăраскал шăратрăм,
Юрăпа юратчăрччĕç мана. (В.Урташ)

1.УОКА ХАТĔРЛЕНЕССИ.
Влентин Урташăн „Тавах, анне” юррине итлесси.
Çак юрра пĕрре мар илтнĕ эсир. Тен, кам та пулин юрлама та пĕлет пулĕ. Анчах çак юррăн сăмахĕсене çыраканĕ кам-ши?
2.КИЛЕ ĔÇЕ ТĔРĔСЛЕССИ.
И.Микулайĕн „Госпитальте” калавĕ тăрăх тест ирттересси.
3.УРОКĂН ЭПИГРАФĔПЕ ПАЛЛАШТАРАССИ.

Юрăпа эп пурнăçа юратрăм,
Юрăпа сыватрăм сурана.
Юрăпа эп ăраскал шăратрăм,
Юрăпа юратчăрччĕç мана. (В.Урташ)

4.ПОЭТ КУН-ÇУЛĔНЧЕН.
Тутар Республикинчи Пăва районĕ çыравçăсемпе питĕ пуян: Иван Юркин, Тайăр Тимкки, Нелли Петровская, Мĕтри Юман, Владимир Ухли, Константин Петров, Александр Алка, Валентин Урташ...







Эпир паян хамăр ентеш кун-çулĕпе тата литературăри ĕçĕ-хĕлĕпе паллашăпăр. Вăл – Раккасси ялĕнче çуралса ӳснĕ Валентин Андреевич Яковлев (Урташ). Çыравçă аса илĕвĕнчен:
Вĕрентекен:
„Эпĕ, Урташ (Яковлев) Валентин Андреевич, Тутарстанри Пăва районне кĕрекен Раккасси ялĕнче 1924 çулхи раштавăн 20-мĕшĕнче хресчен çемйинче çуралнă. 1931-1935 çулсенче ялти пуçламăш шкулта вĕреннĕ, унтан-юнашарти Элшелти вăтам шкулта. А.Д.Кăлкан (Санюк тете) пултарулăхĕпе интересленеттĕм. Элшел шкулĕнче вĕреннĕ чухнех хаçатсенче заметкăсем, тĕрленчĕксем пичетлеттĕм. Хастар юнкор тесе хĕрлĕ кĕпе те парса чыс тунăччĕ.”







Учитель:

Валентин Урташ ача чухнех сăвă – юрă итлеме питĕ юратнă. Поэт амăшĕ Евдокия Сергеевна çапларах аса илет: „Валентин ача чухнех нумай сăвă-юрă пĕлетчĕ. Эпир пĕлекеннинех урăхла сăмахсем хушса хуратчĕ те, юрри тата та илемлĕрех пулса тухатчĕ. Шкултан килетчĕ те пÿртре ĕнĕрлесе çÿретчĕ, унтан тенкел çине тăрса юрласа та кăтартатчĕ."

1941 мĕш çулта раштав уйăхĕнче каччă 17 тултарать. Хăй çулне пысăклатса, хăйĕн ирĕкĕпе аслисемпе пĕрле вăрçа каять. Фронтран янă çырусенче час-часах сăвă йĕркисем те пулнă.

Анне, эп вун çиччĕ тултартăм,
Вун саккăра кайăп ыран.
Шинель тăхăнма та пултартăм,-
Кама халь шинельсĕр куран?

Вăрçă нушине Валентин Урташ ытлашшипех курнă. Çапăçу хирĕнче мина айне пулса сулахай аллине, сылтăммин пÿрнисене, хăрах куçне çухатнă.







*„Пурнăçа юратса, çĕршыва юратса,*
*Ют çĕрте юн тăкса, эпĕ тухрăм вутран.*
*Аннене макăртма, тăванпа тĕл пулма,*
*Савнипе уйрăлма эпĕ килтĕм*

*ютран.*

*Аллăма çухатса, куçăма*
*хăварса,*
*Çĕршыва, пурнăçа вилĕмрен*
*хăтарса,*
*Эпĕ килтĕм киле тăшмана*
*çĕнтерсе,*
*Тăшмана çĕнтерсе, хам куна*
*пĕтерсе…*

Çак икĕ куплетра автор çĕршыва, пурнăçа юратнине ĕненмелле кăтартса парать. Каччă 19 çула кайсан вăрçăра йывăр аманать. Çамрăк вăхăт! Хĕрсемпе чи таса юратăвăн тутине туйса, киленсе, савăнса пурăнмалли вăхăт. Фронта тухса кайиччен юратнă хĕрĕ пулнах ĕнтĕ унăн. Анчах та фронтран хăрах алăсăр, хăрах куççăр чăнахах та юратнă хĕрĕшĕн кирлех те мар пулма пултарнă ĕмĕр ирттерме. Хĕрсен те сывă та тĕреклĕ çынпа çемье çавăрас килет ĕнтĕ. Ывăлĕ çавăн пек таврăннăран амăшĕ макăрмасăр, хуйхăрмасăр пулман-тăр.

Çамрăклах çавăн пек сусăрланса юлни хурлантарнă та. Хăйĕн чун ыратăвне сăвăпа, юрăпа пусарма тăрăшнă, юрату туйăмне те хăйĕн ăшĕнче пытарнă ĕнтĕ вăл. «Савнипе уйрăлма» тенĕ сăмахсем чуна пырса тивеççĕ. Савнийĕ унран сивĕнмен пулсан та алăсăр, куççăр çынпа ĕмĕр ирттерес темен пулĕччĕ-и? «Тăванпа тĕл пулма» тени те шухăша ярать. Поэт тăванпа калаçса та хăйĕн чун ыратăвне пусарнă, паллах. Сăвăсем çырса йăпаннă вăл.
Унăн сăввисемпе паллă композиторсем Г.Хирбю, Ф.Лукин, А.Сергеев тата ыттисем те юрă хывнă. Вăл юрăсене халăх юратса юрлани те Урташа кăшт та пулин çăмăллăх панах ĕнтĕ,»-
тет чăваш халăх академийĕн академикĕ Виктор Симаков В.Урташ пирки.
Учитель:
1944 çулта вăл Хусанти „Хĕрлĕ ялав” хаçат редакцийĕн районсем тăрăх тухса çӳрекен корреспонденчĕ пулнă, Чăваш литературине çывăхрах пулас тесе, 1946 çулта яланлăхах Шупашкара куçса килнĕ. Пĕр вăхăтра Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи радиовещанипе телевидени комитетĕнче ĕçленĕ.

**Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пулнă салтаксене лартнă палăксене Грузире сирпĕтсе аркатнă вăхăтра Тутарстанри Тăхăрьялта паттăр ентешĕсене халалласа Асăну хăми уçрĕç. Çĕр ĕçченĕ пуçарнă ырă ĕçе нимĕн те кансĕрлеймест, хаяр сивĕ те палăк уçмалли кун çывхарнă май чакса пычĕ. Декабрĕн 25-мĕшĕнче Пăва районĕнчи Раккассинче Валентин Андреевич Урташа халалланă стелăна чаплă лару-тăрура уçрĕç.**

Пысăках мар Раккасси ялĕ варринче тимĕртен эрешлесе тĕрленĕ карта варринче çӳллех те мар, çирĕп, тĕреклĕ палăк ларать. Унта хура гранит çине шурăпа çак вырăнта чăваш поэчĕ, юрăçи, вăрçă паттăрĕ В.А.Урташ çуралса ӳсни çинчен пĕлтерсе çырнă. Ку палăк Тăхăрьял халăхĕ юратнă сăвăçне сума сунин, ĕмĕрлĕхе хăйĕн асĕнче хăварнин пĕлтерĕшĕ. Купаланнă кашни кирпĕчĕнче, тимĕр картан кашни кукринче чăваш халăхĕн чĕринче вырнаçнă юратăвĕн пĕр пайĕ, ăшши вырнаçнă тесен те юрать.

Вĕренекен:

«Тăхăрьял»– тĕлĕнмелле тăрăх, кунта чаплă çынсем кăна мар, çынна хисеплеме пĕлекен халăх пурăнать. Урташ – чăваш сăмахĕн асамçи, пире хальхи пурнăçра çавăн пек çынсем çитмеççĕ. Ăна асăнса палăк лартни çав тери паха. Урташ вăл Урташ. Ăна сăмах каласа ӳстерме те, чакарма та çук. Сиртен вĕренмелли нумай пирĕн. Ку енне ытларах килме тăрăшăпăр», – терĕ Шупашкартан килнĕ чăваш çыравçисен пĕрлĕхĕн ертӳçĕСергейПавлов.

Валентин Урташăн çакăн пек кĕнекисем кун çути курнă:







„Çурхи кунсем" (калавсем, 1951)
„Чун савнăран" (сăвăсемпе юрăсем, 1958)
„Саншăнах юрлатăп" (сăвăсем, 1961)
„Пĕчĕк Роза" (поэма-очерк, 1964)
„Аслă йыш" (сăвăсемпе поэмăсем, 1966)
„Сăрă хурт" (сатирăллă сăвăсем, 1969)

## 5.КАНУ САМАНЧĔ

Юрӑпа эп пурнӑҫа юратрӑм,
Юрӑпа сыватрӑм сурана.
Юрӑпа эп ӑраскал шӑратрӑм
Юрӑпа юратчӑрччӗҫ мана.
Валентин Урташ

Пурӑнма вӗрентрӗ мана юррӑм.
Хушрӗ паттӑррӑн ҫӗре кӗме.
Ӗмӗрте эп хам та юрӑ пултӑм,
Юрӑ турӑм хамӑн вилӗме.
Муса Джалиль.

Ачасем, сирӗн умӑрта икӗ сӑвӑ ҫаври. Анчах та авторӗсем тӗрлӗрен. Сӑвӑсен пӗрпеклӗхӗ мӗнре-ши?

--

Муса Джалиль ҫинчен эсир тутар литератури урокӗсенче вӗреннӗ. Вӑл П.Хусанкайпа Ухсай Яккӑвӗн ҫывӑх тусӗ пулнӑ. Ҫапӑҫура аманса тыткӑна лекнӗ хыҫҫӑн та Муса Джалиль кӗрешме пӑрахман. Вӑл хӗҫпе те, сӑмахпа та ҫӗнтерӳшӗн ҫапӑҫнӑ. Моабит тӗрминче ҫырнӑ сӑввисемшӗн тутар поэтне пӗтӗм тӗнче хисеплесе чыслать.




## 6.ПОЭМА ТӐРӐХ ӖҪЛЕССИ

Поэма мӗнле пуҫланать?

Хайлавра пил сӑмахӗсем тӗл пулаҫҫӗ-и?

Ашшӗ сӑмахӗ халӑх сӑмахлӑхӗн хӑш жанрне ҫывӑх?





Пурӑнас килет-автобиографилле поэма

| | |
|---|---|
| Жанр | Автобиографилле поэма |
| Сюжет йӗрӗ | Ӑсату, вӑрҫа тухса кайни, вӑрҫӑ хирӗнче, киле таврӑнни |
| Сӑвӑ виҫи | Анапест |
| Рифма | Мӑшӑр |
| Илемлӗх мелӗсем | Этитет:ват йӑмра, ачаш ҫил, сар хӗвел<br>Фразеологизм:чӑх чӗри, ҫичӗ ют<br>Сӑпатлантару: ҫил ҫупӑрлать,калаҫать йӑмра |

1.Сӑвӑ виҫи.

2.Тишкерӳ.

3.Словарь ӗҫӗирттересси:

Саламат-чăпăркка, кнут с длинным черенком и привязанным к онцу бечевки куском холста(М.Р.Федотов,Этимологический словарь)

Ямшăк- лавçă, ямщик(Скворцов М.И., Русско-чувашский словарь)

Шомпол-тасаткăч(пăшал кĕпçин), (Скворцов М.И., Русско-чувашский словарь)

Хусах- холостой парень (М.Р.Федотов,Этимологический словарь)

7. Пĕтĕмлетӳ тăвасси.

Лирика геройĕн вăрçă хыççăнхи пурнăçне кластер урлă уçса парасси.

---

8. Вĕренекенсен пĕлĕвне хакласа тивĕçлĕ паллăсем лартасси.

9.Киле ĕс п

„Пу ĭх кинол




---